Çын тата саккун

Ытла кая юлнă ӳкĕнӳ

Мăшăр кăвакарчăна асăрхатăн та епле илемлĕн курăнаççĕ вĕсем. Хăйсен чĕлхипе тем çинчен йăвашшăн пуплеççĕ. Çӳл тӳпене улăхма мăшăр çунат та çумрах. Е тата алла-алăн тытăнса, шăкăлшăкăл калаçса утакан хĕрпе яша асăрхатăн та вĕсенчен телейли те çук та пуль тетĕн. Ун пек чухне ĕмĕр тăршшĕпе шурă кавир, çутă ĕмĕтсем яланлăхах пулассăн туйăнаççĕ. Анчах тахăш самантра сар хĕвеле хура чатăр тыткăнлать. Шел пулин те, мăшăрсем хушшинчен хура кушак чупса каçнин сăлтавĕ пуça минретекен, ăс-тăна çухатакан эрех черкки пулса тăрать. Шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй уйрăмне черккепе çыхăннă инкек-синкек пирки кунсерен чылай пĕлтерӳ килет.

Акă çак кунсенче кăна-ха районти суд залĕнче Калмăккасси ялĕнче пурăнакан 36 çулхи Валерий Владимирович Макаров пирки приговор янăрарĕ. Суд ăна Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 111 статйин 1 пайĕпе айăпларĕ.

2007 çулхи февралĕн 18-мĕшĕнче вăл 22 сехетре килĕнче хирĕçӳ кăларать. Пĕрле пурăнакан А.Н. Николаевана (çырăнман) сывлăхне ятарласа хавшатать. Ăна урипе хырăмĕнчен виçĕ хутран сахал мар тапать. Çапла вара хĕрарăмăн сули çурăлать, ват хăмпи татăлать, вар-хырăм хăвăлне юн тулать, сывлăхшăн йывăр сиен шутланать. Анчах та мĕнле сăлтава пула тухнă-ха çак синкер ĕç? Инкек тӳснĕ хĕрарăм лару-тăрава çапларах ăнлантарса парать. Хăйĕн малтанхи кăтартăвĕнче вăл пĕрле пурăнакан арçын хĕнени пирки пĕлтерет. Анчах та тепĕр икĕ кун иртсен протоколпа паллашнă хыççăн ăна тĕп тăвать. Кăтартăва улăштарать. Февралĕн 18-мĕшĕнче пускил хĕрарăмĕ патĕнче эрехпе хăналанаççĕ. Çавăн хыççăн выльхăсем пăхма кĕнĕ имĕш. Унта вара тислĕк тасатнă самантра вăкăр урипе хырăмĕнчен тапнă. Хыççăн пӳрте кĕрсе вырттнă, çывăрнă. Пĕрле пурăнакан арçын ĕçрен таврăннă çĕре сивĕ пӳрт кĕтсе илнĕ. Ирпе тăнă çĕре хăйне япăх туйнă.

Июнь уйăхĕнчи кăтарту вара урăхларах. Эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕскер выртса çывăрнă. Кун каçа выльăх-чĕрлĕхе апат паман, вутă хутман, 2003 çулта çуралнă Карина хĕрача пӳртре пулнине те маннă пулас. Çакă вара ĕçрен таврăннă пĕрле пурăнакан арçынна килĕшмен. Вăл ӳсĕрскерне вăратма пикеннĕ, анчах та эрех вăйĕ хĕрарăма çĕнтернĕ... Арçын мăкăртатăвĕ хăлха çуммипе кăна иртнĕ. Каярахпа хăйне япăх туйнипе вăраннă. Арçын выльăхсем патĕнче аппаланнăран пӳртре пулман. В.В. Макаров каланă тăрăх унта 01 сехетченех пулнă. Ирхине васкавлă пулăшу машинине чĕнме тивнĕ. Çав кунах ăна операци тума тивнĕ. Арçынĕ каçару ыйтнă, урапа чăнах та тапнине йышăннă.

Енчен те 36 çулхи Алевтина Анатольевна Николаева эрех серепине лекмен пулсан, лару-тăру çакăн пек пулса та тухмĕччĕ-и тен? Ашшĕпе амăшĕн чунсăрла хăтланăвĕ çемьери ачасен чун-чĕринче еплерех йĕр хăварать-ши тата?

Çапах та çемьере çул çитмен ачасем пурри В.В. Макаровăн айăплавне çемçетме май парать. Çапла вара суд ăна икĕ çуллăха ирĕкрен хăтарма, муниципаллă унитарлă предприятин "Шупашкар хулин страхлакан больница кассине" тăватă пин те икçĕр утмăл виçĕ тенкĕ куçармалла турĕ. Çакăн пек пĕр самантрах улшăнчĕ Калмăккасси ялĕнчи çемье ăшши.

О. НИКОЛАЕВА,
районти шалти ĕçсен пайĕн следователĕ, юстици аслă лейтенанчĕ.

Милици хроники

Çынлăх ĕмĕрĕ хыçа юлчĕ-ши?

Хĕнеççĕ те пусмăрлаççĕ, намăса та пĕлмеççĕ. Кăмăлсипет тасалăхĕ тата çынлăх пирки асăнмалли те çук. Мĕн кăна пулса иртмест-ши пирĕн хушăмăрта.

Акă Йуçкасси ял тăрăхне кĕрекен Патаккасси ялĕнчи Патаккасси урамĕнчи 52 çулхи хĕрарăм хуçалăхĕнче пĕр шутламан çĕртен инкек-синкек сиксе тухать. Августăн 12-мĕшĕнче 23 сехетре 37 çулхи арçын сасси каçхи шăплăхра шари! янăраса каять. Ăна паллă мар арçын çĕçĕпе суранлатать. Мăйĕ самай аманнă арçынна Муркашри тĕп больницăн хирурги уйрăмне илсе çитерме тивет. Инкек кăтартакан çын Мускав облаçĕнче çуралса ӳснĕ, Шупашкар хулинче пурăнакан 51 çулхи арçын пулнă. Кам е мĕн хистенĕ-ши ăна çав териех çынсăрла хăтланма?

Тепĕр пăтăрмаха пăхса тухмасăр та иртме çук. Августăн 8-мĕш каçхине Çĕньял Муркашри Çурçĕр урамне арçури килнĕ тейĕн. Чуманкасси ял тăрăхне кĕрекен Çĕньял Апашра çуралса ӳснĕ 33 çулхи арçын обществăлла йĕркелĕхе пăсать, пневматикăлла винтовкăпа усă курать. Куçĕсем çакскерĕн аван курнă пулас, виçĕ хутчен 49 çулхи арçынна персе тивертет. Пĕр вĕриленсе кайнăскер, çӳлерех асăннă адреспа пурăнакан 48 çулхи хĕрарăма та куçран вĕçертмест. Те ахаль патакпа çапас темен, те хытăрах лектерес шутпа бейсбол патакки "туянтарать". Инкек тӳснĕ икĕ çыннăн та тĕрлĕ сурансемпе Муркашри тĕп больницăн хирурги уйрăмне пулăшу ыйтма кайма тивет. Халĕ хулиганла ĕçсем тăвакан пирки РФ УК 213 ст. 1 п. уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Çын пурлăхне хапсăнни мĕн хака ларать?

Хапсăнса курнисем каланă тăрăх, хакĕ самай пысăк. Анчах та çавăн пирки Шетмĕпуçĕнче пурăнакансем пачах та илтмен тет. Малашне вĕсем те пĕлĕç ĕнтĕ. Çак ялти Çамрăксен урамĕнчи 18 çулхи яш пĕр хуçалăхри мунча çенĕкĕн çăрине çĕмĕрсе кĕрет. Унтан вара пилĕк тĕрлĕ электроинструмент вăрласа тухать. Ах! Епле намăс, Тăван çĕршыва хӳтĕлес яш хăйĕн ятне вăрă ĕçĕпе варалама ĕлкĕрчĕ те ĕнтĕ. Вăл çамрăк кăна-ха, анчах та РФ УК 158 ст. 2 пайĕн "Б", "В" пункчĕсемпе паллашрĕ те.

Акă тата Мăн Сĕнтĕрти почта çуртне вăрă-хурах куç хывнă. Августăн 10-мĕш каçхине кантăк çинчи тимĕр решеткене татса çурта кĕнĕ. Суту залĕнчен шĕвек кристаллă 17" TFT LCD диагональлĕ, PROVIEW маркăллă виçĕ монитор, икĕ система блокĕ, "HP" маркăллă лазер принтерне, ZYXEL маркăллă модема вăрласа тухнă. Пĕтĕмĕшле вара сиен хакĕ 109654 тенкĕпе танлашать. Халĕ кун пирки милици ĕçченĕсем шырав-тĕпчев ĕçне ирттереççĕ.

Тепĕр вăрă ĕçĕ те августăн 10-мĕш каçхинех пулса иртнĕ. "Колос" ЗАО-ри механизатор МТЗ-80 трактора урама, хăйсен хуçалăхĕ умне лартса хăварнă. Кукăр алăллă, çивĕч куçлă, ют çын пурлăхне хапсăнакансем вара Кĕрекаç ялĕнче те пулнах çав. Ун йышшисем çылăхран та, намăсран та хăрамаççĕ. Çапла вара МТЗ-80 трактор çинчен УТМ-5 топливо аппаратурине вăрласа тарнă. Вăрă пурлăха хĕстерсе каять-ха, анчах аллине хурса хăвармасть çав. Çавăнпа та халĕ пакунлисем ку ĕç пирки хытă тимлеççĕ.

Пĕри шăрăх çанталăкра тар юхтарса уй-хирте тăрăшать, тепри сулхăнра выртса ăçта вăрлама каясси пирки шухăшлать. Хăйĕн ĕмĕтне вара пурнăçлатех. "Ударник" хуçалăх хирĕнче, Тури Панкли ялĕ çывăхĕнче, БДТ-7 маркăллă дисклă суха ларнă. Лартнăранпа икĕ кун иртнĕ. Вăрă шухăшли çавна асăрханă та дисклă икĕ кустăрма, сулахай енĕн кассетисемпе рамине, шлангăпа пĕрле виçĕ гидроцилиндр вăрласа тарнă. Ах еплерех савăнчĕ пулĕ çавăн чухлĕ пурлăх çаратнăскер. Анчах та милици ĕçченĕсем нумаях савăнтармĕç-ха, ӳкĕнес вăхăт та çитĕ.

Мăшăр чи çывăх çын мар-и ха?

Кил-çуртра чашăк-тирĕк сас парать тенине мăшăрсем хушшинче ятлаçу-калаçу тухнипе çыхăнтаратпăр. Анчах темшĕн-çке çакă чылай чухне çапăçăва куçать. Пурнăç чăнлăхĕ çапла, инкек тӳсекенни – хĕрарăм. Акă çак тĕслĕхре те çавăн пек. Ишмула ялĕнчи Ишмула урамĕнче хирĕçӳ тухать. Шăкăл-шăкăл пурăнакан хăш-пĕр мăшăрсем каç кӳлĕм пахчана кайăк сассисемпе киленме тухаççĕ тет. 48 çулхи чăкăртăш арçынна вара темĕн килĕшмен. Кĕпе-йĕм çуса паракан, вĕри яшкапа сăйлакан арăмне каçхине хăйсен пахчинче хĕнет. Пӳтсĕр арçыннăн чышки самай сулмаклă пулнă ĕнтĕ. Каçхи лăпкăлăха тискер сасă пăлхатать. Терт-асапа нушаллă пĕр хĕрарăм чун-чĕри кăна туять. Йăлăнакан куçсем те тискер арçынна ним пирки те каламаççĕ, хĕрхенӳ туйăмне те çуратмаççĕ. Çапла вара хĕрарăмăн йывăр сурансемпе Мăн Сĕнтĕр больницин хирурги уйрăмне çитме тивет. Кил ăшшишĕн тав тума пĕлмен арçын каçарăва те тивĕç мар, паллах. Пакунлисем РФ УК 116 ст. тĕплĕнрех паллаштарсан кăштах та пулин ӳкĕнме пĕлĕ-ши?

Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Тухтăр сĕнĕвĕ

Кĕркунне те сăвăсран асăрханăр

Кĕрхи вăрман ял çыннине илĕртет. Кăçал мăйăрĕ те ăнса пулчĕ. Кĕçех кăмпа тухĕ. Вăрман илемĕпе киленнĕ май çынсен кунта сăвăс вирусĕн энцефалитне тата сăвăс боррелиозне (Лайм чирĕ) ертме пултарас хăрушлăх пирки пĕлмелле. Асăннă чирсем сăвăс çыртнипе ереççĕ.

2006 çулта Чăваш Енре сăвăс боррелиозĕпе 11 çын чирленĕ, кăçал та пĕр çын аптрама ĕлкĕрнĕ. Чире Шупашкар çывăхĕнче, Атăл леш енче тата Çĕрпӳ, Вăрнар, Шупашкар, Етĕрне районĕсенчи вăрмансенче ертнĕ.

Сăвăс юр кайса пĕтсенех чĕрĕлет. Пай ураллă пулнăран питĕ хуллен утать. Çын вăрманпа утса пынă май ăна хăй çине "лартнине" сисмест те, уйрăмах çу-çĕртме уйăхĕсем питех те хăрушă тапхăр шутланаççĕ, анчах та сăвăс урлă чир авăн уйăхĕнче те ерме пултарать.

Сăвăс боррелиозĕ ерсен организмăн чылай органĕпе тытăмĕ сиенленме пултарать: ӳт, нерв тата чĕрепе юн тымарĕсен тытăмĕ, ал-ура хусканаслăхĕ. Чирлисен 60-80 проценчĕн сăвăс çыртнă хыççăн шăп çав вырăнта пысăках мар хĕрлĕ пăнчă тухать. Вăл темиçе кун хушшинче палăрмаллах пысăкланать, диаметрĕпе 3-рен пуçласа 20 сантиметра та çитет, хĕрлĕ пăнчă кĕлеткен çур е ытларах пайне те ярса илме пултарать. Асра тытмалла, сăвăс çакланни чылай вăхăт иртсен те боррелиоз чирĕ пуçланас хăрушлăх пур.

Сăвăс боррелиозĕнчен нимĕнле вакцина та çук, çавăнпа та харпăр хăйĕн чиртен сыхланмалла, тимлĕ пулмалла. Вăрмана нихăçан та çара пуçăн, çара уран каймалла мар. Ӳт çумне çыпăçса тăракан тумтир тăхăнăр, сăвăс шуса ан кĕтĕр. Вăрмантан тухсан тӳрех кĕлеткене тĕрĕслемелле. Сăвăс тумтир çине пытанса ларни те пулать, вăл уйрăмах хуçланчăк вырăна юратать.

Ӳт çумне çыпăçса ларнă сăвăса асăрхасан тӳрех кăларса илмелле (енчен те маларах кăларса курнă пулсан) е медицина учрежденине каймалла.

Сăвăса майĕпен, асăрханса кăлармалла, ас тăвăр, сăмси татăлса юлма пултарать. Кăпшанкăна çу сĕрмелле, ун кĕлетки çине ахаль çипрен тунă 25-30 сантиметр тăршшĕ çекĕл çаклатмалла. Çекĕл вĕçне енчен енне сулласа сăвăса туртса кăлармалла, сурана йод е спирт сĕрмелле. Сăвăса ан пăрахăр, виçĕ кунран кая юлмасăр ЧР гигиенăпа эпидемиологи центрĕн вирусологи лабораторине леçсе парăр.

Çакăн хыççăн сывлăха виçĕ эрне хушши сăнасах тăмалла, енчен те температура хăпарсан, пуç ыратсан, вăй çуккине туйсан тӳрех тухтăр патне каймалла.

Çӳлерех асăннă йĕркесене пăхăнни сăвăс боррелиозĕ ересрен сыхлĕ. Сăвăс тĕл пулакан районсене кайиччен икĕ эрне маларах профилактика прививки тумалла.

З. ПЕТРОВА,
Çĕнĕ Шупашкарти гигиенăпа эпидемиологи центрĕн районти пайĕн специалисчĕ.

Роспотребнадзор асăрхаттарать

Йĕркелĕх кирлĕ

Çу кунĕсем улма-çырла тата ытти чĕрĕ пахча çимĕçпе пуян. Акă арбузпа дыньăна тахçанах сутаççĕ ĕнтĕ. Анчах та вĕсене туяннă чухне мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрмалла-ха?

Арбуза, дыньăна çĕр çинчен тӳрех, пайăн-пайăн каснине туянмалла мар. Суту тăвас пулсан ятарлă картланă вырăн, пахалăха, хăрушсăрлăха çирĕплетекен ятарлă документ кирлĕ. Сутуçăсен вара медицина тĕрĕслевĕ, гигиена аттестацийĕ витĕр тухнине çирĕплетекен медицина кĕнеки пулмалла. Çак йĕркелĕхсене пăхăнсан кăна хăрушлăха сирме пулĕ.

Г. ВОРОБЬЕВА,
Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕн территори пайĕн специалист-экспертĕ.

ПĔЛТЕРӲСЕМ. ОБЪЯВЛЕНИЯ

Продаю доильный аппарат. Тел.: 8-906-136-33-16. д. Хорной.

МУП ЖКХ «Моргаушское» требуются на постоянную работу водители, слесари-сантехники, трактористы. Оплата труда достойная. Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. Коммунальная, д. 2.
Тел.: 2-13-98, 2-16-37.

МОРГАУШИ–МОСКВА (ЧЕРКИЗОВО)–МОРГАУШИ
На комфортабельных автобусах фирмы «Престиж» 2 раза в неделю (вторник, пятница) из с. Моргауши (отправление в 19 часов 40 минут) в Москву и обратно. Из Москвы отправление 13 часов 00 минут. Заказ билетов по тел.: 8-906-387-77-08, 2-12-82 (днем), 2-22-40 (вечером).

Производственно-строительной организации требуются: плотники-сборщики (18 вакансий), водители категории Е (2 вакансии), водитель автокрана (1 вакансия), элктромонтажники (2 вакансии), электросварщики (2 вакансии), сантехник (1 вакансия). Работа в Московской области (г. Лобня). Предоставляется жилье.
Тел.: 8(498)684-30-88, 8(906)720-75-72, 8(903)966-17-66.
Котихин Алексей Иванович, Лукин Тимофей Анатольевич. 1-2.

Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, шифер. Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-862-27-02. 3-3.

КПКГ «Агрокредит» предоставляет краткосрочные займы. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23.
Тел.: 2-18-13. 5-10.

Организации требуются рабочие, мебельное производство. Тел.: 2-25-74. 3-8.

Покупаю бычки: майский, июльский отел.
Тел.: 8-960-309-18-94. 2-2.

Закупаю свинину. Тел.: 8-927-854-96-32; 2-13-77. 3-4.

27 августа состоится освещение Храма Успения Пресвятой богородицы в с. Акрамово. Начало в 7-00 часов. Освещение проводит Владыка Савватий.

Продается мотоцикл ИЖ-Юпитер-5 1991 г.в., в хорошем состоянии. Цена договорная. Тел.: 8-927-844-58-90.

Продаю керамзитобетонные блоки высшего качества. Чебоксарский р-н, д. Сятракасы.
Тел.: 8(22)26-07-80. 1-4.

Молодая семья купит двухкомнатную квартиру или частный дом в с. Моргауши.
Тел.: 8-919-656-65-19. Елена. 1-2.

Продаю а/м ВАЗ-1113 Ока 1997 г.в. Не гнилая, в отличном состоянии, в комплекте зимняя резина, за 35 тыс. руб. Тел.: 8-927-845-04-27. Андрей.

Срочно продается автомашина ВАЗ-21099 1994 г.в., цвет красный, есть музыка, сигнализация. Цена 48 тыс. руб. Тел.: 8-903-967-26-55, 8-927-665-88-06.

Вăкăрсем сутатпăр, çичĕ-сакăр уйăхрисене, шведская горьковская ăратлисем. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх.
Тел.: 8-905-027-85-04.

Муркашри вăтам шкул коллективĕ кунта хурал пулса ĕçлекен В.И. Николаевăн мăшăрĕ
Людмила Петровна
НИКОЛАЕВА
сарăмсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3611.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 24.08.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.А.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.